# Саккунра – çĕнĕлĕхсем

**Водительсем валли**

***2010 çулхи июлĕн 26-мĕшĕнче «Российская газета» хаçатра икĕ саккун пичетленсе тухнă. Вĕсемпе килĕшӳллĕн Раççей Федерацийĕн Административлă майпа правăна пăсни çинчен калакан кодексне тӳрлетӳсем кĕртнĕ.***

**169-ФЗ № Федераллă саккун** 2010 çулхи августăн 6-мĕшĕнчен вăя кĕрет. Унпа килĕшӳллĕн малашне **«состояние опьянения» ăнлав пĕтет**. Водитель сывласа кăларакан сывлăшра мĕн чухлĕ те пулин алкоголь пулсан çакă административлă майпа правăна пăсни шутланать, ун пирки протокол çыраççĕ.

**175-ФЗ № Федераллă саккун** вара 3 тапхăрпа пурнăçа кĕрет:

***2010 çулхи августăн 6-мĕшĕнчен*** çакăн пек улшăнусем кĕтеççĕ:

– патшалăх стандарчĕпе пĕр килмен патшалăх регистраци знакĕсемпе усă курнăшăн – **штраф 500 тенкĕ** (халĕ вăл 100 тенкĕ);

– патшалăх регистраци знакĕсене ятарлă палăртнă вырăнсенче вырнаçтарманшăн, вĕсем курăнассине тĕрлĕ майсемпе ятарласа картланăшăн, автотранспортпа патшалăх регистраци знакĕсĕр усă курнăшăн – **штраф 5000 тенкĕ** е автотранспортпа усă курмалли правăран **1 уйăхран тытăнса 3 уйăх таран хăтараççĕ**;

– автотранспортпа усă курассин правинчен хăтарас ыйтăва транспорта регистрациленĕ вырăнта пăхса тухмалли норма **пăрахăçа тухать;**

– административлă майпа правăна пăснине видеофиксаци мелĕпе палăртнă пулсан, ку ĕçе **материал пынă органта** пăхса тухаççĕ;

– административлă майпа правăна пăсни пирки йышăннă постановление производство участникĕсене постановлени йышăннăранпа **3 кун хушшинче** почта урлă заказлă майпа ярса параççĕ.

***2010 çулхи сентябрĕн 23-мĕшĕнчен*** çакăн пек улшăнусем кĕтеççĕ:

– автотранспорт çинчи кантăксене нормăран ытла тĕксĕмлетнĕшĕн – **штраф 500 тенкĕ** (халĕ 100 тенкĕ).

***2010 çулхи ноябрĕн 21-мĕшĕнчен*** çакăн пек улшăнусем кĕтеççĕ:

– трамвайăн хирĕç килмелли, автомашинăсен хирĕç килмелли çул полоси çине тухса кайнăшăн – транспортпа усă курмалли правăран **4 уйăхран тытăнса 6 уйăх таран** хăтараççĕ;

– автотранспортсен хирĕç килмелли çул полоси çине тухса кайнине автоматла видеофиксаци мелĕпе палăртнă пулсан – **штраф 5000 тенкĕ**;

– юраман вырăнта сулахаялла пăраннăшăн е каялла çавăраннăшăн яваплăх унчченхи пекех юлнă – **1000 тенкĕрен тытăнса 1500 тенкĕ таран штраф**;

– пĕр майлă кăна каймалли çулпа хирĕç кайнăшăн – **5000 тенкĕ штраф** е автотранспортпа усă курмалли правăран **4 уйăхран тытăнса 6 уйăх таран** хăтараççĕ.

**А. ЩЕРБАКОВ,çул-йĕр патруль службин инспекторĕ, милицин аслă лейтенанчĕ.**

**Калав**

# ХИТРЕ ХĔРАРĂМ

Ирхине ирех тăчĕ. Çывăрман та тейĕн. Кĕлĕш пулса выртнă кăна. Шухăш пуçра темĕнли те пулчĕ. Вĕркĕшрĕ те вĕркĕшрĕ. Шухăшлани те мар – темĕн арпашăнни. Анчах та çывăрма паманни – чĕрене ыраттаракан шухăш. Çывăрттармасть те, лăплантармасть те.

Асапланса выртиччен тăрса ларам-ха тесе Микулай вырăн çинчен çĕкленчĕ. Урама тухрĕ. Таса çанталăк. Хитре. Сывлăш уçă. Ирхи çанталăка мĕн çиттĕр ĕнтĕ. Тасалăх. Тасалăх. Татах та тасалăх.

Микулай çак çанталăка пăхса киленчĕ. Ĕнер пулни те, унччен пулни те халĕ ăна темĕнле наччаслăх, ниме кирлĕ марлăх пек туйăнчĕ. Ах! Пулмасть харкашасси! Атту! Пулать пĕр-пĕрне сиввĕн пăхасси! Çак çанталăкпа танлаштаратăп та ытла та айван япаласем кăна иккен вĕсем. Çут çанталăк аслă, çут çанталăк – ĕмĕр, вĕççĕрлĕх! Килти – ытла та пĕчĕк, ытла та ансăр, ытла та хамăр кăна пĕлекенни. Çут çанталăк – хăват, çут çанталăк – пурнăç.

Çапла шухăшланăн асăн сывласа тăчĕ Микулай хапха умĕнче.

Чунĕнче тем каласан та йывăр чул выртать. Çынна пит каласшăн мар та хăйĕн асапĕ пирки, çав-çавах çиеле тухать çав кăмăл тени. Çынна кăтартас мар тесех çав хулана пуçтарăнчĕ Микулай. Начар пулсан темшĕн халĕ çынсем савăнаççĕ. Пурте мар, лайăх çынсем те нумай. Анчах та пĕри-тепри тупăнать те каçса кайсах хĕпĕртет.

Микулайăн хуйăхĕ малтан пысăках та марччĕ. Килĕштерсех пурăнатчĕ арăмĕпе. Ухмахрах çав, ухмахрах. Хитре хĕрарăма качча илчĕ те... Арăмĕ хитре пултăр-ха вăл, анчах та хăв та хитре пул. Микулая Турри хитре туман. Асар-писер хăрушă та мар хăй, анчах арăмне çитеймест. Хитре хĕрарăм вара вăл... Хитре те, курнăç та.

Микулай асапланчĕ. Пĕр çул та мар, иккĕ те мар, вуннă-вуниккĕ. Унтан та ытларах. Арăмĕ хăй хитри пирки кунсеренех систерсе тăчĕ. Чăн та хитре. Йăрăс. Çӳллĕ. Чăвашсем калашле, пĕр кашăк шывпа çăтса ямалла.

Микулай урамра çут çанталăкпа малалла киленчĕ. Килте пăчă, сывлăш çитмест. Кунта – уçă, янкăр, таса...

Хулана каяс терĕ. Мĕн вара, кайма çук-и хулана? Тахçанах пулман унта Микулай. Институт пĕтерни чылай, малтанхи çулсенче кайкалатчĕ. Халĕ – çук. Тахçанах кайман. Темĕн аса та килмен ăна хула. Пурăннă та пурăннă ялта. Выльăх-чĕрлĕхпе аппаланнă. Вĕççĕр – ĕç, вĕççĕр – вăхăт çук.

Халĕ – хулана! Ăнсăртран кĕнĕ çĕнĕ шухăш малтанах Микулая хăратрĕ те, анчах та каярахпа хăюлланчĕ те хăйне хăй хистерĕ: каймалла ара, каймалла, пĕр кун çухатса пăхтăр-ха арăмĕ, тен, хаклама вĕренĕ, тен, татах урăхла – киле те кĕртмĕ...

Микулай ял урамĕпе утрĕ. Темле вăрă пек туйрĕ хăйне. Вăтанчĕ. Çын мĕн калĕ-ши? Микулай ир-ирех ăçта тухса утрĕ тейĕç-ши?

Хулана ларса çитнине аран астăвать. Лăпланчĕ те автобус çинче ун-кун пăхкаласа пычĕ. Уйсем, вăрмансем, тусем, лупашкасем... Пĕтĕмпех куç тĕлне пулаççĕ. Тата – арăмĕ асра. Çухатрĕ пуль. Ах, каласах тухмаллаччĕ. Вырăн çинчех выртса юлчĕ, нимĕн пĕлмесĕр юлчĕ.

Хула. Хĕвĕшӳ. Çынсем.

Микулай палланă урамсемпе утрĕ. Çамрăклăх, яш пурнăç аса килчĕ. Утрĕ-утрĕ те – тăчĕ. Тăчĕ-тăчĕ те – утрĕ...

– Итле-ха,– терĕ каç еннелле Микулай хăйне хăй. – Мĕн тума килнĕ-ха эпĕ ку хулана? Мĕн шыратăп, мĕн çухатнă кунта эп? Хăвăртрах яла таптармалла!

Çапла каларĕ те хăй питĕ шӳкĕл хитре çурт умĕнче тăнине асăрхарĕ. Çурчĕ – капмар, пысăк. Театр иккен. Пысăк саспаллисемпе спектакль ятне çырса хунă: «Хитре хĕрарăм».

«Пулать те-çке арпашу»,– шухăшласа илчĕ Микулай. – Килте те хитре хĕрарăм, кунта та «Хитре хĕрарăм».

Тĕрĕс-ши, тĕрĕс мар-ши, Микулай чăтаймарĕ, туянчĕ билет.

Э-э-э! Çук, тĕрĕс мар. Спектаклĕ аплах мар. Хитре хĕрарăм çинчен. Унăн телей çук. Хитрине пулах телей тупаймасть. Арçынсем нумай-нумай куç хыврĕç. Хăй вара никама та юратма вĕренмен. Хăйне юратнине кăна пĕлет. Юраттарас килет, юратас килмест. «Юратма эпĕ ухмах мар-ха, чуна ахальтен юраттарма кирлĕ-и?»- тет вăл.

Микулай спектакле килĕштермерĕ. Артисчĕсем хитре ĕнтĕ. Вылякан хĕрарăмĕ хитре. Тăрăшса выляççĕ. Шухăшĕ – аплакапла. Кунашкал хитре хĕрарăм килте те пур. Çак сцена çинчи пекех хăтланать хăш чух. Авкаланать те пĕтĕрĕнет. Арçынсем килĕштереççĕ, хăй никама та килĕштермест. Упăшки çине те çӳлтен, çиелтен, куç хӳрипе пăхать.

Микулай тухса каяс терĕ, анчах çынсенчен именчĕ. Ял арçынĕ, тăп та лараймасть, тейĕç пулĕ терĕ, чăтам-ха, антракт пулсанах тус-пĕлĕш патне тухса утатăп, терĕ, ухмах, юлашки автобусран тăрса юлтăм, вăрçрĕ тата хăйне хăй.

Çапла каларĕ те, çапла шухăшларĕ те – айтурух, айтурух! Куçĕ тĕлне люстра лекрĕ!

Епле черчен вăл, епле хитре! Шăрçисем ытарма çук килĕшӳллĕ. Халĕ ĕнтĕ Микулай спектакле мар, люстрăна сăнарĕ. Чăн та, епле хитре, епле шӳкĕл! Ах, мĕн тери тĕрĕс турĕ вăл паян хулана килсе, çак театра кĕрсе! Кун пек илемлĕхе ăçта курнă пулĕччĕ-ши вăл? Пăх-ха, пăх, хитре хĕрарăмран та хитререх вăл çутăлса каять те вуншар-вуншар çынна ăшă, çутă парать...

Хитре хĕрарăм. Вăл – сивĕ, чĕрĕ мар, тӳрккес... Люстра – ăшă, çутă, чуна çывăх.

Микулай çапла танлаштарчĕ. Тĕлĕнмелле, çакă халĕ пин-пин кĕленчеллĕ люстра унăн арăмĕнчен те хаклăрах, тăванрах туйăнчĕ ăна. Ĕмĕр ĕмĕрленĕ арăмĕ темшĕн сивĕ тăчĕ асĕнче. Хитре вăл, хитре, анчах – сивĕ. Люстра – ялкăшса каять халь-халь, ăшă сапать, чуна ыталать...

Сцена çинчи хитре хĕрарăм, арçын умĕнче пĕтĕрĕнекенскер, çапла каларĕ: «Хитрелĕх – асап. Çакна эпĕ туйрăм. Ан пулăр хитре сăнсемпе, пулăр хитре чунсемпе!».

Çак сăмахсем хыççăн чаршав хупăнчĕ, çутă çутрĕç. Пин-пин хĕлхемлĕ люстра ялкăшрĕ. Микулай куç илмесĕр пăхрĕ ăна. Акă вăл – илем! Акă вăл çын аллипе ăсталанă хитрелĕх! Тунă вĕт, тунă вĕт, такам алли çакăн пек шӳкĕл япала тунă вĕт!

Антăхса, кăрт-кăрт сиксе тапакан чĕрипе киленсе ларакан Микулайшăн майĕпен сӳнекен çутă кĕтменлĕх пулчĕ. Люстра çутисем начарланчĕç, каллех тĕксĕмпе хупланчĕç яраписем. Микулай кăрт сикрĕ, вырăнтан сиксе тăчĕ. Алăк еннелле сулăнчĕ.

Ай – пĕтрĕ! Илем, илем... Нумая пымасть иккен вăл, сӳнет, сивĕнет. Люстра та, хитре хĕрарăм та. Ăшши ĕмĕрлĕх мар. Вăхăтлăх. Темшĕн-çке çапла?

Микулай хула урамĕпе утрĕ. Каçхи урам. Чунĕнче – хыт хура. Пĕрре сцена çинчи хитре хĕрарăм куç тĕлне килчĕ, тепре – ялти арăмĕ. Люстра тата.

Утсан-утсан пуçне пĕксе çапла ĕнĕрлерĕ: «Пур-ши манăн чунри хитрелĕх? Чипер те таса пулмалла мар-и чи малтанах хамăн? Тен пин-пин çын хушшинче пĕри тупăнать те курать çакна, манăн чунри хитрелĕхе? Тен хитре хĕрарăмах асăрхать».

**В. КОНСТАНТИНОВ.**

**Прием заявлений**

## ИНФОРМАЦИОННОЕ СООБЩЕНИЕ О ПРОВЕДЕНИИ КОНКУРСНОГО ОТБОРА ИНВЕСТИЦИОННЫХ ПРОЕКТОВ ДЛЯ ПРЕДОСТАВЛЕНИЯ МУНИЦИПАЛЬНОЙ ГАРАНТИИ МОРГАУШСКОГО РАЙОНА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

Муниципальное образование - Моргаушский район Чувашской Республики, в лице Администрации Моргаушского района объявляет о приеме заявлений по отбору инвестиционных проектов для предоставления муниципальной гарантии.

1. Организатором конкурса является муниципальное образование - Моргаушский район Чувашской Республики, в лице Администрации Моргаушского района.

2. Нормативный правовой акт, регламентирующий отбор инвестиционных проектов для предоставления муниципальной гарантии – Решение Моргаушского районного Собрания депутатов от 27.11.2009г. №С-36/2 «О районном бюджете Моргаушского района на 2010 год» и решение Моргаушского районного Собрания депутатов от «16» июля 2010г. №С-42/6 «Об утверждении Положения муниципальной поддержке инвестиционной деятельности в Моргаушском районе».

3. Муниципальная гарантия предоставляется хозяйствующим субъектам, занимающихся в сфере элитного семеноводства зерновых культур и картофелеводства. Максимальная сумма гарантии составляет 3,5 млн. рублей.

4. Место подачи заявлений для участия в конкурсе:

Прием заявлений на участие в конкурсе осуществляется по адресу: 429530 Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Мира, д.6, каб. 214, 2 этаж, тел. 62-2-38, 62-2-35 в рабочие дни с «8.00» часов до «17.00» часов, перерыв на обед с «12.00» до «13.00».

5. Срок подачи заявлений:

Дата начала подачи заявлений: «7» августа 2010 г.

Дата окончания срока подачи заявлений: «6» сентября 2010 г.

6. Заявление и приложенные к нему документы к нему должны быть сброшюрованы в одну папку, прошиты и скреплены печатью.

Инвесторы для участия в конкурсном отборе инвестиционных проектов на предоставление муниципальных гарантий направляют в срок, не превышающий 30 дней со дня опубликования информационного сообщения, в Совет по инвестиционной политике бизнес-план, составленный в соответствии с законодательством Российской Федерации, законодательством Чувашской Республики и настоящим Порядком, а также подписанные руководителем и заверенные печатью юридического лица следующие документы (в двух экземплярах):

1) заявление о намерении получить муниципальную гарантию с указанием ее предполагаемого размера;

2) копия устава юридического лица, а также все изменения и дополнения к нему;

3) копия учредительного договора или решения уполномоченного органа о создании юридического лица;

4) копия документа, подтверждающего факт внесения записи о юридическом лице в Единый государственный реестр юридических лиц;

5) копия лицензии на осуществление хозяйственной деятельности в случае, если для занятия соответствующим видом деятельности необходима лицензия в соответствии с законодательством Российской Федерации и законодательством Чувашской Республики;

6) подтверждающие неприменение процедур, предусмотренных законодательством Российской Федерации о банкротстве, выданные не ранее чем за 30 дней до дня подачи заявления;

7) копии бухгалтерской отчетности юридического лица за последние три финансовых года (формы 1 - 5) и на промежуточные отчетные даты (формы 1, 2) с отметкой налогового органа об их принятии, в случае проведения обязательного аудита - с приложением аудиторских заключений по результатам аудита годовой бухгалтерской отчетности за последние три финансовых года, отраслевые формы отчетности;

8) подтверждение финансовых отдела администрации Моргаушского района Чувашской Республики об отсутствии просроченной задолженности по денежным обязательствам перед Моргаушским районом Чувашской Республикой, а также неурегулированных обязательств по гарантиям, ранее предоставленным Моргаушским районом Чувашской Республикой;

9) подтверждение налогового органа об отсутствии просроченной задолженности по обязательным платежам в бюджетную систему Российской Федерации, выданное не ранее чем за 30 дней до дня подачи заявления;

10) справка о состоянии действующих расчетных (текущих) валютных и рублевых счетов;

11) заключение структурного подразделения администрации Моргаушского района Чувашской Республики по отраслевой принадлежности представленного инвестиционного проекта, выданное не ранее чем за 30 дней до дня подачи заявления;

12) подтверждение наличия соответствующего требованиям законодательства Российской Федерации обеспечения исполнения инвестором своих обязательств по удовлетворению регрессного требования к нему в связи с исполнением в полном объеме или в какой-либо части государственной гарантии;

7. Контактные лица:

Ананьева Рената Иосифовна, телефон: 62-2-38, Симакова Эльвира Иосифовна, телефон 62-3-41,

Данилова Нина Алекоеевна, телефон: 62-2-35.

**Результаты открытого аукциона**

4 августа 2010 года состоялся открытый аукцион право заключения договоров купли-продажи на земельные участки, расположенные на территории Моргаушского района. Победителем аукциона по лоту №1- земельный участок с кадастровым номером 21:17:071001:163 признана Иванова Надежда Кирилловна. Продажная цена земельного участка составила 6174 руб. Победителем аукциона по лоту №2- земельный участок с кадастровым номером 21:17:130103:152 признана Мигушова Маргарита Михайловна. Продажная цена земельного участка составила 21882 руб. Победителем аукциона по лоту №3- земельный участок с кадастровым номером 21:17:060901:53 признан Львов Евгений Вячеславович. Продажная цена земельного участка составила 39060 руб. Победителем аукциона по лоту №4- земельный участок с кадастровым номером 21:17:080401:201 признана Илугина Наталья Константиновна. Продажная цена земельного участка составила 13860 руб. Победителем аукциона по лоту №5- земельный участок с кадастровым номером 21:17:101001:114 признан Васильев Юрий Валерьевич. Продажная цена земельного участка составила 53865 руб.